# ТЕОФИЛИС ТИЛЬВИТИС

*Литва*

## ЛЕНИН

Нихăçан та манаймăп эп унăн куçне,
Кăнтăрла та, çĕрле те çунать вăл умра.
Вăл мĕнле пăхнинче — пĕтĕм çын ку чухне
Мĕншĕн пурăннине йăлт куран.

Унăн куçĕ Китай çул-йĕрне çутатать,
Индостаншăн та вăл — çутă шанчăк ялан;
Хуп-хура усала шуçăм пек салатать,
Унта чăнлăх тупать шыракан.

Тăвăлпа хумханан аслă тинĕс çинчи
Маяк пек вăл хăватлăн пăхать малалла.
Ĕмĕрсен çул-йĕрне пур этемлĕх тĕнчи
Çав маяк çутипе тытмалла.

Унӑн вилӗмсӗр ҫутӑ хӗвелӗ чуна
Ӗмӗр ҫамрӑк пулма хал-хавал туптарать.
Ӑшӑ куҫлӑ ҫулпуҫӑм, юлташӑм мана,
Ман сӑвва чӗрӗ вӑй вӑл парать.

1949